Шупашкар район хаçачĕ ✵ 1932 çулхи июлĕн 27-мĕшĕнче тухма пуçланă

# ТĂВАН ЕН

1 (9294) № ✵ 2007 çулхи январĕн (кăрлач уйăхĕн) 10-мĕшĕ. Юн кун ✵ Хакĕ ирĕклĕ

## ÇУЛТАЛĂК ВĔÇĔНЧЕ КОСАЧЕВ КИЛЧĔ

***2006-мĕш çул самай пулăмпа асра юлĕ. Тĕрлĕ шайри сахал мар хăна пулчĕ пирĕн тăрăхра, ĕç-хĕлпе паллашрĕ, çĕнĕлле талпăнма пултарнине курса ĕненчĕ. Çулталăк вĕçĕ районшăн тепĕр палла визитпа истории кĕрсе юлчĕ. РФ Патшалăх Думин ют çĕршыв ĕçĕсем енĕпе тимлекен комитет председателĕ, «Пĕрлехи Раççей» политика партийĕн Президиумĕн членĕ К.И.Косачев декабрĕн 30-мĕшĕнче районта пулчĕ.***

### ПОТРЕБКООПЕРАЦИ ОРГАНИЗАЦИЙĔНЧЕ

Районти хăйĕн ĕçлĕ визичĕн пĕр пайне Константин Иосифович потребкоопераци тытăмĕн кулленхи пурнăçне халалларĕ. Пирĕн районти икĕ районпа та çитрĕ вăл. Мускав хăни Чăвашпотребкоопераци ытти хăшпĕр регионсенчи хăй пек обществăсенчен аванрах ĕçленине палăртрĕ. Райпосен тирпейлекен цехсем хăйсен пур. Пулă, пылак шыв тултаракан... – ку вăл пĕр пайĕ кăнаха. Ялта продукци туса илекенсем хăйсен таварне райпо тытăмĕ урлă вырнаçтарма пултараççĕ. Тепĕр ырă ен – райпо çул çук аякри ялсенче те хăйĕн суту-илÿ точкисене тытать. Тепĕр чух вăл лавккасем тупăш мар, тăкак тÿсеççĕ пулин те халăха кулленех кирлĕ таварпа тивĕçтереççĕ.

Кÿкеç райповĕ район центрĕнче унчченхи гастронома юсаса çĕнетнĕ хыççăн самообслуживани магазинĕ хута янине халăх кăмăлтан йышăнчĕ. Ишлейре акă, ун пеккине иккĕмĕшне уçнă çĕре хутшăнса пысăк хăна хĕрлĕ хăю касрĕ.

### «ЛАЙĂХ ПĂР»

Чăвашсен ламран лама куçса пынă йăли – ниме – паянхи кун та манăçман. Уйрăм çынсем çурт-йĕр хăпартнă чух ытларах тĕл пулаканскер районти пысăк объекта çĕклĕнĕ чух та вырăнлă пулчĕ. Тĕрлĕ предприяти-учреждениre ĕçлекенсем кар тăрса унта хăйсен тÿпине хывреç. Лайăх стадиона кăтартма, мăнаçланмалăх пур. К.И.Косачев та пулса курчĕ унта. Хоккеистсем валли ятарлă площадка пур та, выляканисемпе курнăçма май килчĕ âна. «Лайăх пăр», – хакларĕ вăл.

Физкультурăпа сиплев комплексĕ те çÿлелле кармашнăçем кармашса пырать. Тĕрлĕ залла, темиçе бассейнлă тăваканскере çитекенни республикăра пулмĕ тесе халех хаклаççĕ. Унти ĕç-хĕлпе те паллашрĕ Константин Иосифович.



Фото ÿкерчĕкĕ авторăн.

***Кÿкеç райповĕн магазинне асăнмалăх – календарь. Ала пусаканни – К.И.Косачев тата унăн пулăшуçи. Хыçалти А.П.Князев.***

### БИЧУРИН МУЗЕЙĔНЧЕ

«Бичурин тата паянхи самана» музейе Типнер ялĕнче çуралса ÿснĕ, чăвашсенчен академик ятне пĕрремĕш тивĕçнĕ Иакинф Бичурин пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ тата район историйĕ кăна мар, тем тĕрлĕ пуян материалпа паллашма пулать. Сантр Пикл художникăн ĕçĕсем те кăсăклă. Музейри курав чăвашсен авалхи ĕçхĕлне, тĕнче курăмне çутатса парать. Мăн асаттесен пуç тайнă ырă Турăсемпе (Çулăм, Шыв, Çĕр, Сывлăш) усал-тĕсел те пур. К.И.Косачев кăсăкланса тăнларĕ чăвашсен кун-çулĕ, Бичурин утса тухнă çул-йĕр, Тăван çĕршывăн аслă вăрçине хутшăннă паттăрсем тата ытти çинчен кĕскен каласа панине. Музее вăл парне кÿчĕ.

### ЧИРКĔВЕ ТЕ МАНМАРĔ

Совет самани вăхăтĕнче чиркÿсене ватнă, çĕнĕрен тăваcси пирки шутламан та. Халĕ вара уçăлма пуçларĕç. Кÿкеçре чиркÿ пулман, ĕненекенсем валли темиçе çул каялла кĕлĕ çурчĕ çĕкленчĕ. Унта кайса çынсем хăйсен чунĕсене лăплантараççĕ, йывăрлăхра тĕкĕ шыраççĕ. К.И. Косачев чиркĕве кĕрсе тухрĕ. Çĕкленекен храм валли тупра хыврĕ, Николай аттепе тата чиркĕве çÿрекенсемпе каласрĕ.

«Сывлăх» наци проекчĕ епле пурнăçланнипе паллашма вара Ишлейри 2-мĕш район больницинче пулчĕ, унти медперсоналпа каласрĕ, нацпроекта епле хакланипе кăсăкланчĕ.

В.ЭВЕРККИ.

Кăрлачăн 12-мĕшĕ – Раççей Федерацийĕн Прокуратура ĕçченĕсен кунĕ

***РАЙОНТИ ХИСЕПЛĔ ПРОКУРАТУРА ĔÇЧЕНĔСЕМ!***

***Сире пурне те çывхарса килекен Раççей Федерацийĕн Прокуратура ĕçченĕсен кунĕ ячĕпе ăшшăн саламлатăп. Çĕнĕ çулта та саккуна пăхăнса, ĕç-хакăл пуянлăхне кăтартса обществăшăн, гражданиншăн шанчăклă ĕçлессе çирĕп шанса тăратăп.***

***Кулленхи ĕçре хавхаланупа çитĕнÿ, чăтăмлăхпа çирĕп шанăç, çемьере килĕшÿпе тату пурнăç тата çирĕп сывлăх сунатăп.***

А.КНЯЗЕВ, район пуçлăхĕ.

✵ Редактор саламĕ

## ÇĔНĔЛĔХСЕМ ХУШĂНСАХ ПЫРАÇÇĔ

Сывă-и хисеплĕ вулакансем! Апла-и, капла-и – 2007 çула та çитрĕмĕр. 6-мĕш нумай çĕнĕлĕх илсе килчĕ. Пиртен чылайăшĕ, ахăртнех, çавна кура хăйсен шухăшне пурнăçа кĕртме те тытăнчĕ пулĕ, лайăх пуçарăва ăнăçу пултăр. Ку çул вĕсене малалла тăсма пулать, çĕннисене те пуçлăпăр. Вăхăт питĕ хăвăрт иртет тетпĕр. Анчах ним тума ĕлкĕреймен чухне çеç вăл çавăн пек туйăнать. Енчен те ĕмĕтĕмĕре чăн пурнăç тусан ку самант ĕмĕрлĕхе асра юлать, вăхăта хÿререн ярса тытса âна хăмăра валли ĕçлеттернĕ пекех палăрса юлать.

Юлашки çулсенче çĕршыв шайĕнчи Правительство йышăнăвĕсем ялсенче пурăнакан ырă çынсем патнех çитме пуçларĕç. Ку тĕлĕшпе аякка кайма кирлĕ мар: акă, пĕлтĕр ĕçлеме пуçланă тăвата наци проектне илер... Паллах, вĕсем вырăнти тата республика шайĕнчи влаç тытăмĕсемсĕр пурнăçланаймĕчĕç. Йышăнмалла, ку пуçарусем пирĕн пурнăçа пуянлатма, лайăх сĕм кĕртме аванах пулăшаççĕ. Кăçалтан акă, тепĕр ырă саккун вăя кĕрет: çемьери иккĕмĕш ачаран пуçласа амăш капиталĕ пама пуçлаççĕ.

Урăхла каласан, çĕнĕлĕхсем пĕлтĕрхисем çумне кăçалхисем хушăнаççĕ. Пурнăç интересленсех пырать. Ку тĕлĕшĕнчен кăçал 75 çул тултаракан «Тăван Енсĕр» те кичем пулма пултарать. Ара, вăл пĕлтерÿсем çеç мар-çке, пурнăçа та пур енлĕн çутатать.

Çавăнпа пурне те ырлăх-сывлăхсăр пуçне ку çулта та палăртнă шухăша пурнăçа кĕртме ăнăçу сунатăп, вăхăта хÿререн ярса илсе хăвăра валли ĕçлеттернĕ пекех пултăр.

В.СОРОКИН, тĕп редактор.

## КĂÇАЛХИ ПĔРРЕМĔШ АЧА

Январĕн 1-мĕшĕнче 3 сехет те 56 минутра район пульницинче çуралнă, âна Иван ят панă. Иван Геннадьевичпа Алина Леонидовна Лукинсен çемйинче вăл – çиччĕмĕш ача! Сăмах май, январĕн 7-мĕшĕ тĕлне района 7 кайăк вĕçсе килнĕ.

С.СЕРЕГИН.

## ТĔПРЕН ИЛСЕН, ЛĂПКĂ ИРТНĔ

Ытлари кун район пуçлăхĕ патĕнчи кăçалхи пĕрремĕш планеркăра район активĕ канмалли кунсенчи лару-тăрăва пĕтĕмлетрĕ. Коммуналлă службăсен ертÿçисем, вĕрентÿ пайĕн, социаллă аталану пайĕн пуçлăхĕсем, район больницин тĕп врачĕ, пушар хурал надзорĕн, шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕ тухса каласрĕç. Планеркăна А.П.Князев ертсе пычĕ.

Тĕпрен илсен, канмалли кунсем лăпкă иртнĕ. Анчах хăш-пĕр инкексемсĕр пулман. Тутаркассинче, сăмахран 1-мĕшчен шыв вăхăт-вăхăт чарса тăнă. Кăшавăшри пĕр çуртра путвалта çăра ватса кĕрсе çулăм-тĕтĕм кăларнă тата икĕ, телее, пысăках мар пушар Мерешпуçĕнче (мунча), Сархурăнта (сарай) тухнă. Икĕ пысăк преступлени палăртнă, иккĕшĕнче те айăплисене тупнă.

В.ТРОФИМОВ.

✵ Январĕн 12-мĕшĕ - Прокуратура кунĕ

## РАÇÇЕЙ ПРОКУРАТУРИ – 285 ÇУЛТА

***1722 çулхи январĕн 12-мĕшĕнче Пĕрремĕш Петр патша Раççей патшалăхĕн чи аслă надзор тытăмĕ – прокуратура туса хурасси çинчен ятарлă указ кăларнă. Пĕрремĕш генерал-прокурор пулма Павел Иванович Ягужинские лартнă. Патша çапла каланă: «Сей чин – яко око наше».***

Унтанпа виçĕ ĕмĕре яхăн иртрĕ ĕнтĕ. Прокуратура анлă та вăрăм çул утса тухрĕ. Самана кирек епле улшăнсан та патшалăхăн право никĕсĕ шутланнă, халăх интересĕсене хÿтĕленĕ. 1917 çулхи октябрьти революци хыççăн âна пĕтернĕ. Раççейре прокуратура туса хуни çинчен указ кăларнăранпа 200 çул иртсен, 1922 çулта, прокуратура органĕсене каялла тавăрнă. Çав çулхи çурла уйăхĕнче прокуратура органĕсем Чăваш Енре те ĕçлеме пуçланă. Республикăн пĕрремĕш прокурорĕ пулма Шупашкар районĕнчи Чăрăшкассинче çуралнă Александр Петрович Лбова çирĕплетнĕ.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи совет халăхĕшĕн анчах мар, прокуратурăшăн та чи йывăр тапхăр пулнă. Вăрçă хирĕнче республикăри 27 прокурорпа следователь пуç хунă. Пирĕн ĕçченсем саккунлăха çирĕплетес тĕлĕшпе право йĕркине сыхлакансене яланах ырă тĕслĕх кăтартнă.

Юлашки вăхăтра Чăваш Республикин прокуратурине Е.П.Пустовалов, Е.П.Жучков, С.В.Русаков, С.П.Зайцев ертсе пынă.

Хальхи вăхăтра пирĕн республикăн прокурорĕ пулса В.Г.Метелин тăрăшать. Прокуратура кунĕ умĕн Шупашкар районĕн прокурорĕсем пулнă В.Е.Долгова, Г.А.Михопаркина, А.А.Александрова, В.С.Абросеева, Г.М.Львова ырă сăмахпа асăнас килет. Хальхи вăхăтра Шупашкар районĕн прокуратуринче оперативлă 12 ĕçчен вăй хурать: прокурор, виçĕ çумĕ, прокурорăн 6 пулăшуçи тата 2 следователь.

Прокуратура органĕсенче И.И.Сорокин, А.П. Иванов, С.В.Марасанов, А.И.Никифоров, В.В. Гаврилова нумай ĕçлеççĕ, çамрăк сотрудниксемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăраççĕ. Юлашки çулсенче район прокуратурине юстицин аслă канашçи Илья Иванович Сорокин ертсе пырать. Прокуратура кунĕпе прокуратура ветеранĕсене, çак службăра хальхи вăхăтра тăрăшакансене тата хаçат вулаканĕсене саламлатпăр. Пурне те çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, ĕçре пысăк ăнăçусем сунатпăр.



Ю.МИХАЙЛОВ фото ÿкерчĕкĕ.

***Прокурор пулăшуçи П.В.Анисимов, прокурор çумĕ А.П.Иванов, прокурорăн аслă пулăшуçи В.В.Гаврилова, прокуратурăн аслă следователĕ А.П.Степанов, прокурор пулăшуçи А.Н.Афанасьев, прокурор çумĕ С.В.Марасанов, район прокурорĕ И.И.Сорокин, прокурорăн аслă пулăшуçи В.М.Марков, прокурор пулăшуçи Е.Г. Афанасьева, прокурор çумĕ Ю.П.Михайлов, аслă следователь Р.Р.Родионов.***

Ю.МИХАЙЛОВ, район прокурорĕн çумĕ, юстицин аслă советникĕ, Раççейри Журналистсен союзĕн членĕ.

✵ Синоптиксем пĕлтернĕ тăрăх

***Юн кун, январĕн 10-мĕшĕ*** улшăнса тăракан çанталăк, юр е çумăр çума пултарать кăнтăрла -1 çĕрле -1

***Кĕçнерни кун, январĕн 11-мĕшĕ*** пĕлĕтлĕ çанталăк, кăштах юр çăвать, кăнтăрла +1 çĕрле -1

***Эрне кун, январĕн 12-мĕшĕ*** пĕлĕтлĕ çанталăк, юр е çумăр çума пултарать кăнтăрла +1 çĕрле 0

***Шăмат кун, январĕн 13-мĕшĕ*** пĕлĕтлĕ çанталăк, кăштах юр çăвать кăнтăрла +1 çĕрле 0

✵ Ветерансен пурнăçĕ

# МĔН ТУНИНЕ ПĔТĔМЛЕТРĔМĔР

Декабрĕн 23-мĕшĕнче Ишлейри ĕçпе вăрçă ветеранĕсен организацийĕн пухăвĕ пулчĕ. Ĕç ветеранĕ Ю.М.Перлов Хĕрлĕ Çар 65 çул каялла фашистла Германи эшкерĕсене Мускав патĕнчен çапса ывăтни çинчен каласа кăтартрĕ. Пухура республикăри ветерансен организацине йĕркеленĕренпе 20 çул çитнине паллă турăмăр. Астăватăп-ха, 1991 çулхи сентябрĕн 23-мĕшĕнче Ишлей тăрăхĕнчи ветерансем культура çуртĕнче пухăнчĕç. Районти ĕçпе вăрçă ветеранĕсен канашĕн председателĕ Н.С.Орлов Ишлей тăрăхĕнче ветерансен пуçламăш организацине йĕркелеме сĕнчĕ, пурте унпа килĕшрĕмĕр, организацие ертсе пыма Г.Н.Николаева суйланă. Организаци канашне ытларах вăрçă ветеранĕсене кĕртрĕç: Г.Д.Александрова, Н.П.Сорокина, Г.Н.Илюшина, Л.П.Волкова, А.И.Кушникова, В.А.Матвеева, Г.К.Грибова тата ыттисене те.

Вăл 15 çулта туса ирттернĕ ĕçсем çинчен каласа пĕтереймĕн. Пĕтĕмлетсе çакна палăртмалла: пĕччен пурăнакан вăрçăпа ĕç ветеранĕсене, салтак арăмĕсене, инвалидсене нумай пулăшнă. Сăмахран, Хачăкри вăрçă ветеранĕн Иван Филипповичăн çурчĕ япăхланса кайнăччĕ, районти социаллă пулăшу пайĕ тăрăшнипе ăна çĕнĕ çурт лартса панă.

Пирĕн организаци ӳссе пыракан ăрăва патриотла воспитани парас енĕпе нумай вăй хунă. Уйрăммăн илсен, ветерансем шкулсенче пулса ачасене Тăван çĕршыва хӳтĕлеме сахал мар вĕрентнĕ. Çак ĕçе халĕ те туса пыраççĕ.

Шел пулин те, 1941-45 çулсенчи Аслă вăрçăра çĕршыва хӳтĕлесе хăварнисем пурнăçран кайса пĕтнĕпе пĕрех. Паянхи кун тĕлне пирĕн тăрăхра вăрçăн 28 ветеранĕ, 5 салтак арăмĕ тата 152 тыл ĕçченĕ шутланать. Вĕсен интересĕсене хӳтĕлес тĕлĕшпе малашне те ĕçлесшĕн-ха. Организацие эпĕ 15 çул ертсе пыратăп. Шел те, юлашки çулсенче ветерансемпе çыхăнса ĕçлеме йывăрланчĕ. Пирĕн тăрăхра радиоузел ĕçлеме пăрахрĕ. Çакна шута илсе эпир малашне «Тăван Ен» хаçатра Ишлей тăрăхĕнчи ветерансем валли тивĕçлĕ информацисем пĕлтерсе тăма палăртатпăр. Çавăнпа, хисеплĕ юлташсем, çак хаçата çырăнса илме чĕнсе калатăп.

Пухура пирĕн ыйтусене ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Я.Кушев хуравларĕ. Ю.М.Перлов, Н.А.Воробьева, В.Н.Кондратьева, Н.Г.Илюшин, Л.Я.Хрисанов тата И.А.Петухова Хисеп хучĕсене тивĕçлĕ пулчĕç. Н.А.Воробьевана тата Ю.Е.Филиппова çуралнă кун ячĕпе саламларăмăр.

Культура çуртĕнчи художество пултарулăх коллективĕ ветерансене концерт кăтартрĕ.

Г.НИКОЛАЕВ,
Ишлейри ĕçпе вăрçă ветеранĕсен канашĕн председателĕ.

## АНАТ-КĔНЕРСЕН САВĂНĂÇĔ

***Çак куна тахçанах чăтăмсăррăн кĕтнĕ. Вăл тинех декабрĕн 26-мĕшĕнче çитрĕ – Анат-Кĕнерте модельлĕ библиотека уçăлчĕ. Унăн заведующийĕ – Т.И.Викторова.***

ЧР Президенчĕн хушăвĕпе килĕшӳллĕн пирĕн районта ĕçлеме пуçланă модельлĕ библиотекăсен хисепĕпе ку 15-мĕш пулчĕ. Çак савăнăçлă кунпа саламлама район администрацийĕн социаллă аталану уйрăмĕн ертӳçин çумĕ М.Павлова, Вăрман-Çĕктер ял тăрăхĕн пуçлăхĕ В.Тереев, районти тĕп библиотекăн директорĕн çумĕ Г.Тимофеева тата ыттисем килчĕç.


А.СУСМЕТОВА фото ӳкерчĕкĕ.

*Модельлĕ библиотекăн заведующийĕ Т.И.Викторова учительсене урок ирттерме пулăшать.*

Çак статуса илчĕ пулсан унта Интернета кĕме пулĕ. Çавăн пекех кунта принтер, сканер, тĕрлĕ тĕслĕ телевизор, DVD-плеер тата темĕн те пур. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ 2007 çулта тата тепĕр компьютер парнелеме пулсан шкул ачисем пушшех те савăнчĕç. Сăмах май, ялти библиотека шкул çуртĕнче вырнаçнă, çавăнпа вĕренекенсене çӳреме тата меллĕрех. Учительсем те партта хушшинче ларакан ачан тавракурăмне ӳрăнта хальхи информаци çăмăллăхĕсемпе ӳстерме май пурришĕн хĕпĕртерĕç.

А.СУСМЕТ.

## ПРОФИЛАКТИКА ЫЙТĂВĔСЕМПЕ

Район администрацийĕн пуçлăхĕн А.П.Князевăн йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн кашни уйăхăн юлашки кĕçнерни кунĕнче районта профилактика кунĕ иртет. Ку тĕлĕшпе ĕçлекен ятарлă комиссин 2006 çулхи юлашки ларăвĕ Чăрăшкасси ял тăрăхĕн администрацийĕнче иртрĕ. Комисси председателĕ В.Н.Мустаев ертсе пынипе иртнĕ çулта право йĕркине çирĕплетес тĕлĕшпе туса ирттернĕ ĕçсене тишкернĕ, çак енĕпе палăрнă çитменлĕхсене кăтартса панă. Лару ĕçне выранти депутатсем, вĕрентӳ, культура учрежденийĕсен ертӳçисем хутшăннă.

Çав кунах вăл Кӳкеçри 27-мĕш профтехучилищĕре те пулнă. Райадминистрацин çул çитмен çамрăксен ĕçĕсемпе тимлекен тата вĕсен прависене хӳтĕлекен комисси унта хăйĕн черетлĕ ларăвне йĕркеленĕ. Ун ĕçне профтехучилищĕн педколлективĕ хутшăннă. Ларăва райадминистрацин вĕрентӳ управленийĕн пуçлăхĕ Г.В.Николаев ертсе пынă.

С.СЕРЕГИН.

*Пирĕн районти учительсем – А.В.Ярандайкинапа А.К.Смирнов, Çĕньял–Покровски шкулĕ – Нидерландири шкулсенче пулса хальхи информацилле вĕрентӳ методикипе паллашни çинчен эпир çырнăччĕ. Унсăр пуçне унта çул çӳрев вăхăтĕнче мĕн-мĕн курни çинчен каласа пани те питĕ интереслĕ.*

## АМСТЕРДАМА ХĂВ КУÇУПА КУРНИНЕ МĔН ÇИТĔ

Нидерландире 16 млн. яхăн çын пурăнать, территори – 41800 тăваткал км. Протестант тĕнĕ сарăлнă, голланди чĕлхипе калаçаççĕ. XVII ĕмĕр пуçламăшĕччен Голланди çĕрĕ Испание пăхăнса тăнă.

Учительсен ушкăнĕ пĕр эрне ытла Амстердамра ирттернĕ. Тĕп хула Европăри чи пысăк портсенчен пĕри шутланать, хăй вара Çурçĕр тинĕс хĕрринчен темиçе теçетке километртра вырнаçнă. Тинĕспе ăна чаплă канал çыхăнтарать. Хула ячĕ Амстел ятлă шывран пулса кайнă. 1270 çултах Амстердама шыв илесрен дамбăсемпе шлюзсем тума пуçланă. Хула варрипе пĕкĕ пек авăнса пысăк канал иртет, ытти урамсенчи каналсемпе пĕрлешет. Урама урлă е тăрăхла каналсем хĕрринчи хĕрлĕ тата хура черепицăпа витнĕ кирпĕч çуртсем пĕр-пĕринпе çыпăçса ларнă тейĕн. Катерсем кирлĕ вырăна часах илсе çитереççĕ. Шĕвĕр тăрăллă ĕлĕкхи керменсем, тĕрлĕ чиркӳсем, башньăсем, кĕперсем, шлюзсемпе дамбăсем, скверсемпе чечек йăранĕсем – çакăн пек хăйне май илемлĕхпе урăх ниçта та киленеймĕн.

Аçта кăна илсе çӳремен пуль Чăваш çĕрĕнчи учительсене. Амстердамра тĕлĕнмелле вырăнсем сахал мар. Акă XIX ĕмĕр вĕçĕнче тунă Шурă тĕп вокзал. Вăл 8687 йывăç свай çинче тăрать. Вокзалпа юнашар – Хăмăр кафе. Карапсемпе килекен-каякан моряксем табак туртнипе ĕмĕрсем хушшинче тĕтĕмленсе ларнă зал туристсемшĕн интереслĕ.



*Голландецсем наци тумĕпе.*

Музейсем, палăксем питĕ нумай. Чи чапли – Патшалăх музейĕ (1885ç.). кунта XV-XVII ĕмĕрсенчи картинăсен пысăк коллекцийĕ. Ван Рейн Рембрандт 1639-1658 çулсенче ĕçлесе пурăннă çуртра халь художникăн музейĕ. Ван Гогăн 700 яхăн картинисемпе ӳкерчĕкĕсене упрама 1973 çулта ятарласа çĕнĕ музей çурчĕ уйăрнă. 1940-1945 çулсене асăнса лартнă Наци монуменчĕ пур хулара.

Амстердам – культура центрĕ. 1888 çулта уçнă пысăк Концерт залĕсĕр пуçне темиçе театр, курав тата культура вырăнĕсем. Апрель уйăхĕнчен пуçласа кĕркуннеченех чечек куравĕсемпе аукционсем иртеççĕ. Шăпах пирĕн ентешсем Амстердамра пулнă чух, октябрь пуçламăшĕнче, пур çĕрте те тĕлĕнмелле хитре чечексем куçа савăнтарнă. Çĕр ытла нӳрĕ ан пултăр тесе унта йăрансене çӳллĕ купалаççĕ.

«Аякс» футбол командин стадионне те асăнмалла. Вăл уçса хупăнакан çивиттиллĕ. Аэропорт вара тинĕс шайĕнчен 5 метр аяларах. Сăмах май, Голланди чиккисем, Европăри пур çĕршывсенчи пекех, çул çӳрекенсемшĕн уçă.

Амстердам, паллах, промышленность центрĕ те. Полиграфи, хими, электроника аталаннă. Çывăхра – тĕнчипе паллă çил арманĕсем.

Çĕршывăн парламенчĕ Гаага хулинче вырнаçнă. Беатрикс королеван резиденцийĕ уйрăм кермен йышăнать. Пурăнасса вăл хăйĕн çемйипе уйрăм керменте пурăнать. Гаага, Хук-ван-Голланд тата Делфтпа Влардинген хулисем тăвакан тăваткĕтеслĕх «Европăн сад-пахчийĕ» ятпа паллă.

Роттердам – «Европăн тинĕс хапхийĕ», тĕнчери чи хăватлă тавар йышăнакан–ăсатакан порт. Ытти пысăк хуласем: Утрехт – радиопа телевидени аталаннă, Герлем, Лейден – университетсемпе чапа тухнă.

Т.ВЕРЕНДЕЕВА.

## ХУЙХĂ-СУЙХĂ МАНĂÇĂНАТЬ

***Çĕнĕ çул умĕн Кӳкеçре пурăнакан Клавдия Прокопьевна Осипова килĕнче пулма тӳр килчĕ. Ĕç ветеранĕ, пĕтĕм Раççейри инвалидсен обществин хастар членĕ, тĕрлеме-çĕлеме юрататать. Январьте 71 çул тултарать пулин те, пĕр сехет те алă усса лармасть, ун валли яланах ĕç пур.***

Кил-çуртне питĕ пăхса тăрать вара. Пӳртĕнче тирпейлĕ, таса. Кашни япали – хăйĕн вырăнĕнче. Тĕрлĕ тĕслĕ çипрен тĕрлесе тунă япаласем чылай. Стена çинче – кавир (сарлакăшĕ –2,3, çӳллĕшĕ 1,1 метр), ăна алă вĕççĕн ăсталанă. Илемлĕ, куçа илĕртет. Калаймастăн та килте эрешленĕ тесе, лавккаран туяннă пекех туйăнать.

Ĕненетĕр-и, Клавдия Прокопьевна çыхăракан кравать качча кайма хатĕрленекен хĕрупраç вырăнне аса илтерет! Тĕлĕнмелле шурă: çитарĕсем те, утиалĕ те, чĕнтĕрлĕ çи виттийĕ те...


Фото ӳкерчĕкĕ авторăн.

*К.П.Осипова.*

Чирлекелесех тăрать пулсан та, çи-пуçне, килти япалисене, ал шăллисене пурне те шапшурă тытать.

Кӳкеçре ăна пĕлекенсем нумаййăн, кунта вăл 1961 çултанпа пурăнать. Çав çул «Паха тĕрĕ» фабрикăра ĕçлеме пуçланă, çемье çавăрнă. 1968 çулта упăшкипе çурт лартнă, 1992 çулта ăна пăсса çĕнĕрен тунă. Шел, тепĕр 4 çултан Чернобыльти инкеке пĕтерме хутшăннă упăшки пурнăçран уйрăлса кайнă. 10 çул ĕнтĕ пĕчченех. Юрать-ха, хĕрĕ, кĕрӳшĕ, мăнукĕсем Çĕнĕ Шупашкартан килсех тăраççĕ, пулăшаççĕ.

– Осипова инвалидсен организацийĕн ĕçне 1989 çултанпах хутшăнать, – терĕ тĕрленчĕк геройĕпе тĕл пулма пĕрле пынă А.Т.Архипов, районти инвалидсен организацийĕн ертӳçи.– Сельхозтехника таврашĕнче пурăнакан инвалидсене пĕрлештерсе тăрать, вĕсенчен взнос укçи пухать, вĕсене культура мероприятийĕсене хутшăнтарать. Сăмахран, кăçал инвалидсене театра, А.Сарри концертне илсе кайма пулăшрĕ, Шуршăлти космонавтика музейĕнче пулса куртăмăр. 2006 çулта Çĕнĕ Шупашкарта иртнĕ зонăри выставкăна К.П.Осипова та хăйĕн ал ĕçĕсене тăратнă. Ăна «Халăх йăли-йĕркине упранăшăн» номинацире Хисеп хучĕ парса чысланă. Декабрь уйăхĕнче Шупашкарти Чăваш наци музейĕнче республикăри инвалидсен выставки уçăлнă, вăл январĕн 15-мĕшĕччен тăсăлать. Унта хăйĕн ĕçĕсене Осипова та кăтартнă.

Пĕтĕмлетсе каласан, 2001 çултан пуçласа вăл выставкăсене нумай хутшăннă.

«Сывлăх пулсан малашне те хутшăнас кăмăл пур-ха,– сăмахлать кил хуçи. – Алла йĕппе çип тытатăп та чирсене те, хуйха-суйха та манса каятăп, чунра лăпкă вара...»

Çуллахи вăхăтра ытларах пахчара тăрмашать. Кĕркуннеченех унта. Пахча-çимĕç, улма-çырла ӳстерет, пыл хурчĕсене пăхать. Пире те пылпа чей ĕçтерсе хăналарĕ. «Çапла ĕçлесе вăхăт мĕнле иртнине те сисместĕп эпĕ, – пытармасть кил хуçи. – Тен, çапла пурăнни лайăх та. Кулянса лармастăп...»

Ю.ЮМАН.

# ЦЕРКОВНЫЕ ПРАЗДНИКИ

### ПЕРЕХОДЯЩИЕ

Неделя мясопустная - 5-11 февраля
Масленица, Прощеное Воскресение - 12-18 февраля
Вербное Воскресенье - 1 апреля
Пасха - 8 апреля
День св. жен-мироносиц (православный женский день) - 22 апреля
Вознесение Господне - 17 мая
Троица - 27мая

### НЕПЕРЕХОДЯЩИЕ

Рождество Христово - 7 января
Крещение Господне. Богоявление - 19 января
Сретение Господне - 15 февраля
Благовещение Пресвятой Богородицы - 7 апреля
Преображение Господне - 19 августа
Успение Божией Матери - 28 августа
Рождество Пресвятой Богородицы - 21 сентября
Воздвижение Креста Господня (постный день) - 27 сентября
Введение во храм Пресвятой Богородицы - 4 декабря

### ПРАВОСЛАВНЫЕ ПОСТЫ

Рождественский - 28 ноября-6 января
Великий - 19 февраля-7апреля
Петров - 4 июня-12 июля
Успенский - 14 августа-27 августа

### ДНИ ОСОБОГО ПОМИНОВЕНИЯ УСОПШИХ

Вселенская мясопустная родительская суббота - 10 февраля
Суббота 2-й седмицы Великого поста - 3 марта
Суббота 3-й седмицы Великого поста - 10 марта
Суббота 4-й седмицы Великого поста - 17 марта
Радоница - 17 апреля
День поминовения воинов - 9 мая
Троицкая суббота - 26 мая
Димитриевская суббота - 3 ноября




**Обычно годы Кабана характеризуются спокойствием, порядком и законностью, изобилием и радостями в жизни.**

**Январь**

| П | В | С | Ч | П | С | В |
|---|---|---|---|---|---|---|
| 1 | 2 | 3 | 4 | 5 | 6 | 7 |
| 8 | 9 | 10 | 11 | 12 | 13 | 14 |
| 15 | 16 | 17 | 18 | 19 | 20 | 21 |
| 22 | 23 | 24 | 25 | 26 | 27 | 28 |
| 29 | 30 | 31 | | | | |

**Февраль**

| П | В | С | Ч | П | С | В |
|---|---|---|---|---|---|---|
| | | | 1 | 2 | 3 | 4 |
| 5 | 6 | 7 | 8 | 9 | 10 | 11 |
| 12 | 13 | 14 | 15 | 16 | 17 | 18 |
| 19 | 20 | 21 | 22 | 23 | 24 | 25 |
| 26 | 27 | 28 | | | | |

**Март**

| П | В | С | Ч | П | С | В |
|---|---|---|---|---|---|---|
| | | | 1 | 2 | 3 | 4 |
| 5 | 6 | 7 | 8 | 9 | 10 | 11 |
| 12 | 13 | 14 | 15 | 16 | 17 | 18 |
| 19 | 20 | 21 | 22 | 23 | 24 | 25 |
| 26 | 27 | 28 | 29 | 30 | 31 | |

**Апрель**

| П | В | С | Ч | П | С | В |
|---|---|---|---|---|---|---|
| | | | | | | 1 |
| 2 | 3 | 4 | 5 | 6 | 7 | 8 |
| 9 | 10 | 11 | 12 | 13 | 14 | 15 |
| 16 | 17 | 18 | 19 | 20 | 21 | 22 |
| 23 | 24 | 25 | 26 | 27 | 28 | 29 |
| 30 | | | | | | |

**Май**

| П | В | С | Ч | П | С | В |
|---|---|---|---|---|---|---|
| | 1 | 2 | 3 | 4 | 5 | 6 |
| 7 | 8 | 9 | 10 | 11 | 12 | 13 |
| 14 | 15 | 16 | 17 | 18 | 19 | 20 |
| 21 | 22 | 23 | 24 | 25 | 26 | 27 |
| 28 | 29 | 30 | 31 | | | |

**Июнь**

| П | В | С | Ч | П | С | В |
|---|---|---|---|---|---|---|
| | | | | 1 | 2 | 3 |
| 4 | 5 | 6 | 7 | 8 | 9 | 10 |
| 11 | 12 | 13 | 14 | 15 | 16 | 17 |
| 18 | 19 | 20 | 21 | 22 | 23 | 24 |
| 25 | 26 | 27 | 28 | 29 | 30 | |

**Июль**

| П | В | С | Ч | П | С | В |
|---|---|---|---|---|---|---|
| | | | | | | 1 |
| 2 | 3 | 4 | 5 | 6 | 7 | 8 |
| 9 | 10 | 11 | 12 | 13 | 14 | 15 |
| 16 | 17 | 18 | 19 | 20 | 21 | 22 |
| 23 | 24 | 25 | 26 | 27 | 28 | 29 |
| 30 | 31 | | | | | |

**Август**

| П | В | С | Ч | П | С | В |
|---|---|---|---|---|---|---|
| | | 1 | 2 | 3 | 4 | 5 |
| 6 | 7 | 8 | 9 | 10 | 11 | 12 |
| 13 | 14 | 15 | 16 | 17 | 18 | 19 |
| 20 | 21 | 22 | 23 | 24 | 25 | 26 |
| 27 | 28 | 29 | 30 | 31 | | |

**Сентябрь**

| П | В | С | Ч | П | С | В |
|---|---|---|---|---|---|---|
| | | | | | 1 | 2 |
| 3 | 4 | 5 | 6 | 7 | 8 | 9 |
| 10 | 11 | 12 | 13 | 14 | 15 | 16 |
| 17 | 18 | 19 | 20 | 21 | 22 | 23 |
| 24 | 25 | 26 | 27 | 28 | 29 | 30 |

**Октябрь**

| П | В | С | Ч | П | С | В |
|---|---|---|---|---|---|---|
| 1 | 2 | 3 | 4 | 5 | 6 | 7 |
| 8 | 9 | 10 | 11 | 12 | 13 | 14 |
| 15 | 16 | 17 | 18 | 19 | 20 | 21 |
| 22 | 23 | 24 | 25 | 26 | 27 | 28 |
| 29 | 30 | 31 | | | | |

**Ноябрь**

| П | В | С | Ч | П | С | В |
|---|---|---|---|---|---|---|
| | | | 1 | 2 | 3 | 4 |
| 5 | 6 | 7 | 8 | 9 | 10 | 11 |
| 12 | 13 | 14 | 15 | 16 | 17 | 18 |
| 19 | 20 | 21 | 22 | 23 | 24 | 25 |
| 26 | 27 | 28 | 29 | 30 | | |

**Декабрь**

| П | В | С | Ч | П | С | В |
|---|---|---|---|---|---|---|
| | | | | | 1 | 2 |
| 3 | 4 | 5 | 6 | 7 | 8 | 9 |
| 10 | 11 | 12 | 13 | 14 | 15 | 16 |
| 17 | 18 | 19 | 20 | 21 | 22 | 23 |
| 24 | 25 | 26 | 27 | 28 | 29 | 30 |
| 31 | | | | | | |

# НАГРАДĂСЕНЕ ТИВӖҪНӖ

ЧР Суту-илӳ тата экономика аталанăвӗн министерстви тата ЧР Суту-илӳпе промышленность палати чи лайăх инноваци проекчӗ туса хатӗрлес тӗлӗшпе 2006 ҫул пуҫламăшӗнче республикăри пӗчӗк предприятисем хушшинче конкурс ирттересси ҫинчен пӗлтернӗччӗ. Ăна вара ҫулталăк вӗҫӗнче пӗтӗмлетнӗ. Унта Кӳкеҫри ҫӗнӗлӗхсем пурнăҫа кӗртекен «Новатор» обществăн пултарулăх ушкăнӗ хастар хутшăннă – пӗрремӗш вырăн йышăннă: «Вăрман питомникӗсенче юман тата ҫăка хунавӗсем пăхса ӳстермелли ҫӗнӗ техника тата тухăҫлă технологи» проект туса хатӗрленӗшӗн тата пурнăҫа кӗртнӗшӗн. Унăн авторӗсем – Вăрман хуҫалăх агентствин вăрманпа усă курас тата ăна лартса ӳстерес енӗпе ӗҫлекен пайӗн пуҫлăхӗ Аркадий Аверкиевич Калегин. Ҫӗнӗлӗхсем пурнăҫа кӗртекен «Новатор» общество директорӗ-тӗп конструкторӗ Анатолий Александрович Головин, директорăн производство енӗпе ӗҫлекен ҫумӗ Сергей Михайлович Васильев, станок ӗҫӗсен мастерӗ Николай Михайлович Михайлов тата проектсен дизайнерӗ-«Новатор» общество менеджерӗ Андрей Анатольевич Головин ятарлă диплома тата укҫан премие тивӗҫнӗ.

Ҫавăн пекех асăннă министерство тата Чăваш Енри рационализаторсен тата тем те пӗр шухăшласа кăларакансем обществи «Чăваш Республикинчи чи лайăх изобретатель тата рационализатор» ята 2006 ҫулта камсем тивӗҫнине палăртнă. «Промышленность» номинацире «Чăваш Республикинчи чи лайăх рационализатор» дипломпа хаклă парнене тата кăкăр ҫине ҫакмалли «Чăваш Республикин 2006 ҫулхи чи лайăх рационализаторӗ тата изобретателӗ» хисеплӗ паллăна «Новатор» общество директорне – тӗп конструкторне, Чăваш Республикин тава тивӗҫлӗ изобретательне Анатолий Александрович Головина панă.

Ю.СЕРГЕЕВ.

# ҪӖНӖ КОМИССИ ӖҪЕ ПУҪĂНЧӖ

Чăваш Республикин Тӗп суйлав комиссийӗн «ЧР Шупашкар районӗнчи территорири суйлав комиссине йӗркелесси ҫинчен» йышăнăвӗпе килӗшӳллӗн пирӗн районта ҫӗнӗрен тӗп суйлав комиссийӗ ӗҫлеме пуҫларӗ. Халӗ унта С.М.Александрова, А.В.Блинов, В.Н.Викторов, В.Ф.Виноградова, Р.Г.Игнатьев, И.Г.Корнилова, З.Л.Маслова, Н.Г.Паймина, О.Н.Семенова кӗреҫҫӗ. Председательне те урăххине ҫирӗплетнӗ. Ку лава малалла Зоя Леонидовна Маслова туртма пуҫлӗ.

Декабрӗн 26-мӗшӗнче ҫак комисси пӗрремӗш ларăва пухăнчӗ. Чи пӗрремӗш ыйту – председатель ҫумне тата секретаре суйламалла. Вăрттăн сасăлав пӗтӗмлетӗвӗпе председатель ҫумӗ – Виктор Викторов, секретарӗ – Ираида Корнилова пулса тăчӗҫ.

Канашлăва ЧР Тӗп суйлав комиссийӗн председателӗ Людмила Линик тата район пуҫлăхӗ Анатолий Князев та хутшăнчӗҫ.

А.СУСМЕТ.

## ОБЬЯВЛЕНИЯ. ПӖЛТЕРӲСЕМ

☎ 2-13-80

### Юбилей ячӗпе

**Чебоксарский топсбыт директорӗ Александр Иванович МИХАЙЛОВ ҫак кунсенче 60 ҫул тултарчӗ. Ытарайми ҫыннăмăра, хисеплӗ ӗҫтеше, мăшăра, аттене, Чăваш Республикин тава тивӗҫлӗ промышленноҫӗн ӗҫченне, Раҫҫей Федерацийӗн топливăпа энергетика комплексӗн хисеплӗ ӗҫченне ҫуралнă кун ячӗпе чӗререн саламлатпăр, ҫирӗп сывлăх, иксӗлми телей, кулленхи ӗҫре ăнăҫупа ҫитӗнӳ сунатпăр.**

**Салампа мăшăрӗ, хӗрӗ, тăванӗсем тата пӗрле ӗҫлекенсем.**

**Администрация** Чебоксарского района, осуществляя функции органа опеки и попечительства, от души ***благодарит*** всех, кто принял участие в подготовке и проведении новогодней елки для детей-сирот и детей, оставшихся без попечения родителей.

Поздравляем всех с Новым годом и Рождеством, желаем здоровья, счастья, благополучия и процветания.

Наши друзья:

- партия «Единая Россия»
- ОАО «Агрофирма «Ольдеевская»
- директор ОАО «Сельский комфорт» С.П. Анисимов
- ООО «Чебоксарская птицефабрика»
- ОАО «Чувашский бройлер»
- педагоги МУДО «Центр детского творчества» Ю.И. Краснова, О.Б. Васильева, Т.А. Семенова, Т.М. Козлова
- Кугесьское райпо Чувашпотребсоюза

Огромное всем спасибо! Да воздастся всем Вам за доброту Вашу.

**Участник** долевой собственности Кириллов Афанасий Никитич сообщает о своем намерении выделить земельный участок 1,28 га пашни в поле №II первого полевого севооборота около д.Яранкасы из земель СПК-колхоза «Пучах» Чебоксарского района ЧР. Свои возражения прошу присылать в течении 30 дней по адресу***: п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района.***

**Участник** долевой собственности на землепользование СХПК им. И.Г.Кадыкова из д.Мошкасы, ул.Лесная, д.18 Чебоксарского района ЧР Васильева Капитолина Михайловна сообщает о своем намерении выделиться из земель СХПК им.И.Г.Кадыкова с земельной долей 2,15 га пашни в поле №4 овощного севооборота вдоль дороги Новочебоксарск-Кугеси, восточная сторона. Возражения прошу присылать в течении месяца со дня выхода в печать настоящего объявления в адрес ***территориального отдела Управления Роснедвижимости по ЧР, п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.9.***

**Участник** долевой собственности на землепользование СХПК им.И.Г.Кадыкова Павлова В.К. сообщает о своем намерении выделиться из земель СХПК им.И.Г.Кадыкова Чебоксарского района ЧР с земельной долей 2,15 га пашни в 1790 м и севернее жилого дома № 19 по ул.Садовая д.Мошкасы. Возражения направить по адресу: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.9, территориальный отдел по Чебоксарскому району Управления Роснедвижимости по ЧР.***

**Участники** долевой собственности СХПК-колхоза им. Куйбышева Чебоксарского района ЧР Иванов А.Г., Афанасьева Е.Н. сообщают о выделе земельной доли площадью по 2,97 га пашни каждый в поле №4 (IV) $1_{пз}$ участок №3 южнее д.Чиршкасы, примыкающий с землями поселения с южной стороны. Возражения направить в течении 30 дней по адресу: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района.***

**Участники** долевой собственности проживающие в д.Малый Сундырь сообщают о своем намерении выделить земельные участки на территории СХПК «Атăл» Чебоксарского района по следующим ориентирам и площадям по 1,47 га пашни на 1 долю в поле №2 третьего севооборота юго-восточнее д.Малый Сундырь: Ешметьев А.А., ул.Магистральная, 31 – 2 доли; Аввакумова З.Л. и Аввакумов В.З., ул.Песочная, 1 – по 1 доли; Аввакумов И.В., ул.Магистральная,26 – 2 доли; Ешметьева З.Н. и Ешметьев В.Н., ул.Магистральная, 16 – по одной доли; Моисеев В.Т. – 2 доли, Моисеева В.Г. – 1 доля и Моисеева М.С. – 1 доля ул.Песочная, 11; Майоров А.Д. – 1 доля, ул. Магистральная, 32; Ильин Ф.Я., Ильина А.И. и Ильин Я.П. – по 1 доли, ул.Становая, 21. Возражения просим прислать в течении месяца в наш адрес и в адрес ***территориального отдела по Чебоксарскому району Управления Роснедвижимости по ЧР, п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.9.***

**Участники** земельной доли Соловьев Ю.В., Александрова Ю.А., Александров А.Б., Александрова Г.В., Александрова Н.А., Александров Ю.В. сообщают о своем намерении выделиться из долевых земель СХПК «Туруновский Чебоксарского района ЧР в счет доли в поле №1 полевого севооборота, участка №1 по 2,09 га пашни около д.Анаткас-Туруново. Возражения просим прислать по адресу: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района*** в течении месяца со дня опубликования объявления.

# ИШЛЕЙ РАЙПОВӖ РАҪҪЕЙРЕ ВИҪҪӖМӖШ

Декабрӗн 26-мӗшӗнче пирӗн района Чăвашпотребкоопераци тытăмӗнче ӗҫлекенсем, тӗрӗсрех каласан, райпосен председателӗсем килсе ҫитрӗҫ. Хăнасем потребкоопераци тытăмӗ районта епле аталаннипе паллашнă май чылай объектра пулса курчӗҫ, ҫав шутра – Ишлейре тепре уҫма хатӗрлекен самообслуживани магазинӗнче те.




*Ишлей райповӗнчен вӗренмелли пур.*

Потребкоопераци тытăмӗн ӗҫне пӗтӗмлетнӗ ҫӗре район пуҫлăхӗн пӗрремӗш ҫумӗ А.Е.Егорова хутшăнчӗ, вăл райпосен тăрăшăвне пысăка хурса хакларӗ. Шухă предпринимательсем пайти ҫук тесе ура ярса пусман ҫулсăрмӗнсӗр, сахал йышлă ялсенче те райпо магазинӗсем халăха куллен кирлӗ таварпа тивӗҫтереҫҫӗ.

Виҫҫӗмӗш кварталти тата тăхăр уйăхри кăтартупа Ишлей райповӗ Раҫҫейре 3-мӗш вырăн йышăннă. «Кӗр парни» курава хастар хутшăннăшăн райпо председательне Т.Е.Павловăна Шупашкар хулин Калинин район администрацийӗ Тав хучӗ те панă.

В.ТИТОВА.

# УЯВ КĂНА МАР...

Статистика ҫакна кăтартса парать: пурнăҫран уйрăлса каякансен хисепӗ Ҫӗнӗ ҫула пула палăрмаллах ӳсет. Районта кăҫал та ҫаплах пулчӗ. Шел те, январӗн 1-8-мӗшӗсенче харпăр хăй килӗнче 10 виле тупнă. Уяв кунӗсенче Л.С.Николаев (1954 ҫулта ҫуралнăскер, Кӳкеҫри «Строительная» урамри 9-мӗш ҫурт), Шорккари Е.З.Леонтьева (1930 ҫулти), Вăрманкасри П.Н.Чернов (1957 ҫулти), Моҫҫакассинчи Н.Н.Борисов (1942 ҫулти), Кӳкеҫри В.С.Серапионов (1940 ҫулти, «Радуга» урамӗ), Атайкассинчи Е.А.Лукина (1939 ҫулти), Кӳкеҫри А.В.Макаров (1975 ҫулти), Иккассинчи В.А.Матвеев (1956 ҫулти) леш тӗнчене ăсаннă. Вӗсен ӳт-пӗвӗсем ҫинче нимле суран та тупман. Вилӗм сăлтавӗсене моргра палăртнă. Кӳкеҫри С.М.Миронов (1975 ҫулти, «Байдеряковская» урам) Алькешри «Кристалл» кафе патӗнче автоаварие лекнӗ, райбольницăн реанимаци уйрăмӗнче вилсе кайнă. Хӗрлӗҫырти В.В.Порфирьев (1969 ҫулти) хăйӗн сарайӗнче ҫакăнса вилнӗ. Анат Кӗнерти В.В.Мышкин (1950 ҫулти) савăннипе ытларах ӗҫкеленӗ пулмалла, вилсех кайнă. 1970 ҫулти Н.В.Починкина Юртукассинчи Л.А.Семенов килӗнче пурăннă, ăна хытах хӗненӗ, лешӗ вара ҫут тӗнчерен уйрăлса кайнă.

В.НИКОЛАЕВ.

## Кăштах кулăш

Чукчаран ыйтаҫҫӗ:

– Депутата суйлансан мӗн сӗннӗ пулăттăн эсӗ Патшалăх Думинче.

– Утнаккă, Америкăна Аляскăна мар, Чукоткăна сутмалла пулнă...

☺ ☺ ☺

Чукча пульницăна ывăлӗпе пырать.

– Тухтăр, – тет вăл, – манăн ывăл какай, сӗт-ҫу ҫимест.

– Сып-сывах-ҫке! Мӗншӗн ҫимест.

– Утнаккă, ҫук!..

☺ ☺ ☺

Чукча лавккана кӗрет:

– Утнаккă, шампунь пур-и?

– Пур, «яичнăй».

– Шел, эпӗ пӗтӗм кӗлеткене ҫăвасшăнччӗ...

**Предполагается** предоставление в собственность за плату земельного участка площадью 0,05 га с кадастровым номером 21:21:10 20 03:0059, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, п.Сюктерка (земли поселений), для огородничества.

Адрес: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района.***

**Предполагается** предоставление в аренду земельного участка площадью 0,20 га, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, д.Юраково (земли сельскохозяйственного назначения), сроком на 11 месяцев для ведения личного подсобного хозяйства без права возведения на нем зданий, строений.

Адрес: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района. Тел.: (8240) 2-15-92.***

***ОАО «Чурачикское» реализует маленьких бычков по цене 80 рублей за 1 кг живого веса. Обращаться по тел.: 31-4-83, 31-5-63.***

**Собственник** земельной доли Чернова Зоя Николаевна сообщает о намерении выделиться из состава землепользования СХПК «Атăл» Чебоксарского района ЧР в счет доли 1,47 га пашни в поле №3, раб.уч.№2 третьего полевого севооборота юго-западнее д.20 по ул.Становая д.Малый Сундырь. Выделяемый участок не превышает среднекадастровую оценку, поэтому компенсация не предусматривается. Свои возражения направить письменно в месячный срок по адресу: ***п.Кугеси. ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района.***

**Добавление.** В райгазете «Тăван Ен» № 149 от 27.12.06 г. в объявлении о выделении земельных долей Давыдову А.Н. и др. после фамилии «Давыдов А.Н.» добавить фамилию «Тимофеева Л.П.».

***Куплю землю, земельную долю от 1,5 га. Тел.: 48-83-03.***

***Куплю производственную базу. Тел.: 48-83-03.***

Гл. редактор В.Т.СОРОКИН

ТĂВАН ЕН
(“КРАЙ РОДНОЙ”)
Чебоксарская районная газета

Газета зарегистрирована в Управлении Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу 8 ноября 2005г. ПИ №ФС 18-2477

429500, Чебоксарский район, пос. Кугеси, ул. Шоссейная, 13.

Газета выходит на чувашском языке, с периодической подачей страниц на русском, два раза в неделю - по средам и субботам.

Дежурный по номеру: А.А.СУСМЕТОВА.

Учредители: Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики, РГУ “ Редакция Чебоксарской районной газеты “Тăван Ен”,

Рукописи не возвращаются и не рецензируются. Опубликованные мнения не всегда совпадают с точкой зрения редакции. За достоверность материалов ответственность несут авторы. За содержание рекламы ответственность несет рекламодатель.

Гл. редактор - 2-12-61, отдел сельского хозяйства, отдел писем ,отдел общественно-политической жизни - 2-21-88, бухгалтерия - 2-13-80, 2-12-59. E-mail: gazeta@chebs.cap.ru

Номер отпечатан в ГУП «ИПК «Чувашия». Тел.21-00-23.

Печать офсетная. Объем 1,0 печ. лист. Номер подписан в печать: 09.01.2007 г. в 16 час. 00 мин. Тираж 1800. Заказ № Индекс газеты - 54820.